**Хăна юрри**

Хитре çапла килсе курни,
Пĕрне-пĕри хисеп туни.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Ăнса пулсан тырри-пулли –
Ĕçме-çиме сĕтел тулли.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Тухас килмест çак кил-çуртран,
Килĕштерсе пурăннăран.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

Çĕре-шыва сума сăвар,
Шуçăмпалах ĕçе тухар.
Мĕнле аван чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне.

*Давыдов-Анатри, В. Хăна юрри / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 258.*